ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН САККУНĔ

ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПАТШАЛĂХ НАГРАДИСЕМ ÇИНЧЕН" САККУНĔН 12^2 СТАТЙИНЕ УЛШĂНУ КĔРТЕССИ ÇИНЧЕН

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕ
2023 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕнче
йышăннă

1 статья

Чăваш Республикин "Чăваш Республикин патшалăх наградисем çинчен" 2005 çулхи ака уйăхĕн 12-мĕшĕнчи 15 №-лĕ саккунĕн (Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн ведомоçĕсем, 2005, 62 №; 2010, 85 №; 2012, 94 №; Чăваш Республикин Саккунĕсен пуххи, 2013, 6 №; 2014, 3, 9 №-сем; 2015, 12 №; 2016, 10 №; "Республика" хаçат, 2018, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2019, утă уйăхĕн 17-мĕшĕ, раштав уйăхĕн 26-мĕшĕ; 2023, утă уйăхĕн 19-мĕшĕ) 12^2 статйин пĕрремĕш абзацне улшăну кĕртес, унта "муниципалитет должноçĕсене йышăнакан çынсене" сăмахсене "Чăваш Республикинче 10 çултан кая мар муниципаллă должноçсене йышăнакан тата хăйсен полномочийĕсене яланхи йĕркепе пурнăçлакан çынсене, Чăваш Республикинче 15 çултан кая мар муниципаллă должноçсене йышăнакан тата хăйсен полномочийĕсене яланхи йĕркепе мар пурнăçлакан çынсене" сăмахсемпе улăштарас.

2 статья

Çак Саккун ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кун хыççăн вунă кун иртсен вăя кĕрет.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хули
2023 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕ
105 №